# Чăваш тĕпелĕ

# ЯШКАСЕМ





| | |
|---|---|
| çǎмах яшки | суп с клецками |
| купǎста яшки | щи |
| сěт яшки | молочный суп |
| çǎмарта яшки | суп с яйцами |
| пǎрçа яшки | гороховый суп |
| кǎмпа яшки | грибной суп |
| салма яшки | суп с салмой |

# ВĔЛТРЕН ЯШКИ

- **СИМĔС ВĔЛТРЕН**
- **ТĂВАРЛАНĂ АШ**
- **ÇĂМАХ**
- **ÇĂМАРТА**
- **ÇĔР УЛМИ**
- **ПУÇЛĂ СУХАН**
- **ХĂЙМА**



# ВĔЛТРЕН ЯШКИ РЕЦЕПЧĔ





**Вĕлтрен яшкине ашпа пĕçермелле. Тăварланă аш та юрать. Вĕлтренне яшкана яриччен вĕри шывпа чӳхемелле, унтан турамалла. Шурă çăнăхран вĕтĕ çăмах туса ямалла. Икĕ-виçĕ çăмарта лăкаса ярсан та лайăх. Вара яшка тата тутлăрах пулать. Çинĕ чух турилккесем çине пĕрер кашăк хăйма ямалла.**

# КУПĂСТА ЯШКИ





**Купăста яшкине хĕлле, выльăха пусса тирпейлесен, пĕçернĕ. Купăстине яшка валли кĕр пуçламăшĕнчех тăварласа хунă та пăсăласран сивĕ çенĕкре тытнă. Вăл вăхăтри купăстана чĕрĕлле усрама май пулман.**

**Яшкана чукун чӳлмекпе кăмакара пĕçернĕ. Савăта пĕр харăсах шыв, купăста, какай, çĕр улми, сухан янă та çатмапа витсе тин çеç пулса çитнĕ вĕри кăмакана лартнă. Тек ăна çиме вăхăт çитмесĕр те тĕкĕнмен.**

**Чылай вăхăт лăпкăн вĕресе пĕр пăс кăлармасăр пиçнĕ яшка питĕ техĕмлĕ пулнă. Кăмака яшки теççĕ ăна чăвашсем.**

# ТАКА ШУРПИ

- ТАКА ПУÇĔ
- ТАКА УРИСЕМ
- КУКАР
- ПĔВЕР
- АШ
- ТУЛТАРМĂШ
- КĔРПЕ
- ПУÇЛĂ СУХАН
- СИМĔС СУХАН
- ТĂВАР



# ПИТРАВ УЯВЕНЧИ

# КУКАР ШУРПИ

**Июлĕн вун иккĕмĕшĕнче чăвашсем Питрав уявне палăртаççĕ. Çак кун сурăх усракансем така пусаççĕ. Пуснă такан пуçĕпе урисене ĕнтеççĕ, хырса тасатаççĕ. Ун хыççăн вĕри шывпа çăваççĕ, ĕнтнĕ аша кăштах çунăк тути çапать. Çавăнпа пулас ăна кукар теççĕ. Шÿрпе çине кукар, пĕвер, аш яраççĕ. Çакна така шÿрпи теççĕ. Шÿрпене çĕр улми ямаççĕ, кăштах кĕрпе яма пултараççĕ.**

**Тултармăшне те шÿрпене ярса пĕçереççĕ. Тултармăшлă шÿрпе тутлăрах та пулать.**

# ПУЛА ШУРПИ



- ПУЛĂ
- ÇĔР УЛМИ
- СĔТ
- ÇУ
- ТĂВАР
- ПУÇЛĂ СУХАН





# ПЫСАК ТАВ!!!



